

# Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать



**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.**
**Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова**

## Кĕтмен хăна

Ануш паян ирех тĕп хулана çитрĕ. Тухтăр патĕнчен тухсан кăмăлсăрланчĕ. Ара, ыран тата шур халатлă ĕçченсем патне килмелле-иç. Сывлăха тĕплĕн тĕрĕслеттермелле имĕш. Енчен те яла таврăнсан ыран каллех çула тухмалла. Çулĕ вара чăнах та вăрăм. Автобус чарăнăвне çитиччен темиçе çухрăм утмалла.

«Тĕттĕм ялта пурăнатăн», – тенĕччĕ ăна йăмăкĕ. Çук, ун шухăшĕпе килĕшмест Ануш. Мĕнле тĕттĕм пултăр-ха?! Ялĕ центртан аяккарах пулсан та тĕлĕнмелле илĕртӳллĕ вырăнта вырнаçнă. Тавралла улăх-çаран. Шăнкăр-шăнкăр юханшывĕ те юхса иртет. Вăрманĕ те çывăхрах. Çырлине те, кăмпине те упăшкипе иккĕшĕ савăт туллиех татса хĕле валли банки-банкипе çимĕçсем хатĕрлеççĕ.

Мăшăрĕ те унăн Куçма – çав тери ырă, сăпайлă арçын. Унпа пĕрле пурнăç сукмакĕпе утма тӳр килнишĕн Ануш паянхи кун та Турра тав тума манмасть.

Чаплă туй кĕрлеттерме май килмерĕ пулин те, 35 çул шăкăл-шăкăл калаçса, пĕр чĕлхерен пурăнаççĕ вĕсем. Куçма Ануша сив сăмах каласа курман. Паянхи кун та «ман юратнă мăшăрăм» тесе хавхалантарать. Кашни çуралнă кунра илемлĕ чечек çыххи тата пĕр-пĕр тăхăнмалли ялала туянса парнелеме тăрăшать. Ак паян Ануш мăшăрĕ илсе панă кĕпене тăхăннă. Ялти клубра иртекен уявсене те çĕнĕ çипуçпа тухма тăрăшать. Паллах, модăпа çĕлени пулмасан та кашни тумĕ уншăн хаклă. «Ахальтен мар-ха ку. Тен, упăшкун еркĕн те пур. Айăплине пĕлсе сана юрасшăн», – тенĕччĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ Анфиса кĕвĕçсе. Кирек кам мĕн калатăр, анчах та Ануш Куçмана шаннă, шанать те. «Урампа çĕр хĕрарăм утса пытăр. Ман куçăмсем сана кăна шырĕç», – тетчĕ çамрăкрах чухне мăшăрĕ. Малтанах Анушăн çӳçĕ кăпăшка та вăрăмччĕ, йăм хура тĕслĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ, çул иртнĕçемĕн, илем кайса пынине хăй те витĕр курать. Кĕлетки те яштак пӳ-силлĕ мар.

Больницăран тухнă Ануш, шухăшсен авăрне лекнĕскер, троллейбус чарăнăвне мĕнле çитнине те сисмерĕ, тенкел çине ларчĕ. Кунти майрасене сăнарĕ. Пурте тенĕ пекех хăйсен çулĕсенчен çамрăкрах курăнаççĕ. Ануш сумкинчен куçкĕски кăларса пăхрĕ. Унăн кăвак çӳç пĕрчисем çур пуç ытла. Майрасем еннелле тепре куç ывăтрĕ те темĕнле аванмарланса илчĕ. Юлашки вăхăтра тата мăшăрĕ ырă сăмах калани те тарăхтарма пуçларĕ-ха. «Енчен те Анфиса йăнăшмасан... Тен, унăн чăнах та пĕр-пĕр чипер майра пур?» – тĕвĕленчĕ шухăш пуçĕнче. Хăйне çав самантрах ăшĕнче ятласа илчĕ. Ун упăшки йĕркеллĕ çын. Ялта та ырă ятра вăл. Анфиса вара яланах ăмсаннă вĕсен телейне, виççĕ качча кайрĕ хăй, пĕр мăшăрĕпе те çемье вучахне упраймарĕ. Ануш çăмăллăн хаш! сывласа ячĕ.

Вĕсем мăшăрĕпе икĕ хĕре кун çути парнелерĕç. Пурнăç çулĕ çине тăма пулăшрĕç. Хĕрĕсем иккĕшĕ те тĕп хулара пурăнаççĕ. Асли çемьеллĕ, унăн икĕ ача. Кĕçĕнни хальлĕхе Тур çырнине тĕл пулайман-ха. Çĕр каçма шăпах та ун патне кайма шутларĕ. Настя амăшне курсан пачах та савăнмарĕ.

– Эсĕ-и, а-анне?– тĕлĕнчĕ хĕрĕ.

– Тата кам пултăр, санăн аннӳ ĕнтĕ! – хаваслăн калаçма тăрăшрĕ амăшĕ.

– Мĕншĕн хăв хулана килнине пĕлтермерĕн? – сиввĕн пăхрĕ Настя хăйĕн амăшĕ çине.

Ануш мĕн сăлтавпа килнине пĕлсен хĕрĕ тарăхса кайрĕ.

– Мĕншĕн Галя патне каймарăн? Вăл ман пек пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте хĕсĕнсе пурăнмасть вĕт?

Ура çинче тăракан амăшĕ диван çине лăшт ларчĕ. Чĕтрекен сассипе:

– Хва-а-ттерĕ пĕр пӳлĕмлĕ-ха, тăваткал метрĕсем сахалах мар-çке, хĕрĕм, – терĕ вăл.

– Туяннă чухне икĕ пӳлĕмлине илмелле пулнă, – чашкăрчĕ хĕр.

Çак сăмахсем Анушăн чĕрине ыратарчĕç пулин те, шăлне çыртса хăйне лăпкăнрах тытма тăрăшрĕ. Хĕрĕнчен пĕр стакан шыв ыйтрĕ. Настя тĕпеле хăвăртах утса кайрĕ, стаканпа шыв йăтса килсе сĕтел çине хыттăн лартрĕ. Амăшĕ шартах сикрĕ. Савăтри шывĕ ун питне лекрĕ. Ануш ăна юбка аркипе шăлса илчĕ.

– Анне, эс кунта ялта мар, культурăллă пулмалла, – терĕ те Настя амăшĕ умне питшăлли килсе хучĕ. – Тата санăн çӳç те сăрламалла. Атту сакăрвуннăри карчăк пек курăнатăн.

Амăшĕ ура çине тăчĕ те хĕрне пĕреххут çупса ярасшăнччĕ. Анчах та хăйне алăра тытрĕ. Ача чухне лăпка-лăпка утьăкка сиктернĕ, юратса çитĕнтернĕ ачуна кӳрентерме епле хăйăн-ха?! Тухса кайма тесе алăк куккринче туфлине тăхăннăччĕ кăна – сасартăк арçын кроссовкине асăрхарĕ. «Апла Настя пĕччен пурăнмасть», – мĕлтлетсе илчĕ шухăш. «Йĕкĕтпе пĕрле пурăнатăн-тăк, пĕрлешмеллех»,– терĕ кăна Ануш. «Хамăн пурнăçпа хам хуçа!» – кăшкăрчĕ пике. Ануш сывпуллашмасăрах хваттертен тухса кайрĕ. Пĕр вăхăт подъездра тăчĕ. Хĕрĕ йăнăшне ăнланса ун хыççăн тухасса кĕтрĕ. Анчах кăлăхах. Тухмарĕ те, телефонпа та шăнкăравламарĕ.

Хĕрарăм кĕçĕн хĕрĕнчен хытах тĕлĕнчĕ. Хăш вăхăтра Настя чунсăрланма ĕлкĕрнĕши?! Шкулта вĕреннĕ чухне кăмăллă, сăпайлă хĕрачаччĕ. Ĕçе те хăнăхтарнă. Хăй килĕштернĕ профессие алла илме пулăшнă. Анушпа Куçма кĕçĕн хĕрне те кил-çуртлă тăвас тесе нумай тăрăшрĕç. Укçине ытларах ĕçлесе илес тесе çĕрне-кунне уямасăр фермăра ĕçлерĕç, кил хуçалăхĕнче те картиш тулли выльăх-чĕрлĕх тытрĕç. Анчах та хваттер туянма пурпĕр укçи çитмерĕ. Банкран кредит илме тиврĕ. Çапах та Анушпа упăшки нухратăн пысăк пайне хăйсемех хывма пултарнăшăн хĕпĕртерĕç. Анфиса тĕксе илсе пĕрре çапла каланăччĕ: «Юлашки çулсенче ватăлсах кайрăр эсир, пахча-анкартире те иксĕрех ĕçлетĕр, касу та хăвăрах пăхатăр. Ачусем, мăнукусем ав килсе курма пăрахрĕç. Янттине илме кăна хăнахрĕç». Ануш çак сăмахсемшĕн хытах кӳреннĕччĕ. «Санăн ачусем аслă пĕлӳ илеймерĕç, хулара тĕплеленеймерĕç. Çавăнпа пире ăмсанатăн», – тенĕччĕ вăл Анфисăна. Халĕ вара кӳрше пачах та урăх сăмахсем калĕччĕ Ануш. Анчах чавса çывăх та çыртма çук. Кĕçĕн хĕрĕнчен пархатар курмарĕ. Хула пурнăçĕ çапла этеме улăштарать-ши е ашшĕ-амăшĕ ытлашши хӳтĕлĕхе илни ачапчана пăсать-ши? Анук пĕр вĕçĕм шутларĕ, ыйту тупсăмне тупаймарĕ.

Хĕрарăм таранăнăн сывласа илчĕ те аслă хĕрĕ патне кайма шут тытрĕ. Ача садне çӳрекен икĕ мăнукĕ валли супермаркетра пылак çимĕçсем, улма-çырла туянчĕ те кирлĕ маршрут çине ларчĕ.

– Кукам килчĕ, кукам килчĕ! – чĕвĕлтетрĕç шăпăрлансем Ануша курсан. Тӳрех кучченеç пайлама пуçларĕç.

Гальăпа кĕрӳшĕ те Ануша хапăлласах йышăнмарĕç.

– Анне, пирĕн пата хăнана сумлă çынсем килеççĕ. Кунтах çĕр каçма юлаççĕ. Вĕсемпе эпир тепĕр бизнес ĕçне йĕркелесшĕн. Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пулсан та тăвăртарах пулĕ, – ăнлантарчĕç пĕри те тепри. – Ан çиллен, анне!

– Ачамсем, ара, асилтĕм-çке. Ман хулара хĕр чухнехи тусăм пурăнать. Çĕр каçма унта каятăп, – суйрĕ амăшĕ.

Ануш куççульне кăтартас мар тесе хваттертен хăвăртрах тухса кайма тăрăшрĕ.

– Кукам, эс татах пирĕн пата кил. Кучченеçне тата нумайрах ил, – илтĕнчĕ мăнукĕсен сасси.

Ануш урама тухрĕ кăна – вĕри куççулĕ капланса килчĕ, пит тăрăх сăрхăнса анчĕ. Хытах пĕçертрĕ ăна, унтан ытларах вара чĕри ыратрĕ. Кĕтмен хăна пулчĕ-ши вăл ачисемшĕн?!

Тавралăха каç сĕмĕ çапрĕ. Ануш юлашки автобуса та ĕлкĕреймерĕ. Парк еннелле утрĕ. Çынсем саланса пĕтсен пĕр-пĕр тенкел çинче çĕр каçма ĕмĕтленчĕ. Мăшăрĕ шăнкăравларĕ те пĕтĕмпех йĕркеллĕ тесе пĕлтерчĕ.

– Ма суян, инке? – тăрук сăмах хушрĕ пĕр ӳсĕр арçын, Ануш калаçнине илтенĕскер. – Мана паян арăм эрех лĕрккенĕшĕн киле кĕртмерĕ. Санăн та пурнăç ырă мар курăнать. Ну, аптрамастпăр, пире иксĕмĕре сивĕ пулмĕ.

Арçын хĕрарăм еннелле пăхса лĕх-лĕх кулса илчĕ. Ануш калаçăва хутшăнмасăр васкасах утса кайрĕ.

– Эй, Турă, пулăшсам мана, хăвăн чуруна! – сăхсăхрĕ Ануш. Вăхăт нумай та иртмерĕ – кĕсье телефонĕ янăраса кайрĕ. «Хĕрсем амăшне ăстан манчăр ĕнтĕ!» – хĕпĕртерĕ Ануш.

– Анна Ивановна, ку эсир-и? – илтĕнчĕ палламан çамрăк хĕрарăмăн сасси.

– Çапла, – шикленсе хуравларĕ Ануш.

– Хреснапай! Ку эпĕ – София! – терĕ калаçакан.

Шалт тĕлĕнчĕ Ануш. Хресна хĕрĕ иккен апла, вăл ăна ача чухне пĕр виçĕ хутчен курнă-и, курман-и. Амăшĕ çĕре кĕрсен Софийăна мăнаккăшĕ хăйĕн хӳттине илнĕ. Ануш урăх унăн шăпипе нихăçан та кăсăкланман. Халĕ вара чĕререн пăшăрханчĕ. Тăлăх турат пирки чылай вăхăт маннăшăн хăйне ӳпкелемесĕр пултараймарĕ.

Ануш ăçта пулнине пĕлсенех София çăмăл машинăпа хăвăртах парк умне вĕçтерсе çитрĕ. Хреснамăшне ыталаса илчĕ, хăй пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн тăнине, çемьеллĕ пулнине пĕлтерчĕ.

Хăтлă коттеджра Ануша хресна хĕрĕн мăшăрĕ, ачисем кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Тӳрех апат-çимĕçпе тулли сĕтел хушшине лартрĕç. Паян пĕрремĕш хут Ануш ăшшăн йăл кулчĕ.

Хреснамăшĕ валли София пĕр пысăк пӳлĕм уйăрчĕ, пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕ. Тĕлĕнмелле те, Анушăн икĕ хĕрĕ те Софийăпа мăшăрĕ уçнă организацире ĕçлеççĕ иккен. Хреснамăшне кӳрентерекенсене «ăс» кĕртме тĕв турĕ вăл. Кĕçех Анушăн телефонĕ смс-пĕлтерӳсем килнипе çуталса кайрĕ. Темиçе хутчен унта «каçар, анне» тенине вуларĕ вăл.

Тепĕр кунне больницăра пулнă хыççăн хресна хĕрĕ Ануша килне çитиех леçрĕ. Анкартине тухсан хĕрарăм хăй курнине ĕненесшĕн пулмарĕ. Ара ун мăшăрĕпе пĕрле икĕ хĕрĕ тăрăшсах утă тавăраççĕ! Мăнукĕсем те кĕрепле тытнă. Ануш хăйне нихçанхинчен телейлĕ туйрĕ, хресна хĕрне тĕл пулнишĕн Турра чĕререн тав турĕ...

**Елена ГРИГОРЬЕВА**




## Савнă ялăм – икĕ ял

Савнă ялăм манăн иккĕ,
Чи хакли, чи тăванни.
Юрататăп иккĕшне те,
Уйăрмастăп хакĕпе.
Малти Ишек – çуралнă ялăм.
Кунта эп курнă çут тĕнче.
Кунта ачалăхăн тĕнчийĕ,
Тăван кĕтес, атте-анне.
Тăван ялăм ман – Уравăш.
Унпа йăлт çыхăннă малашлăх
Кунта ман пĕчĕк çеç патшалăх,
Çемье, кил-çурт, тăванпа пĕлĕш.
Турă çырнă мăшăра та
Эпĕ тупнă ку ялта.
Пĕрлешсен сăмах та панă
Упрама кил ăшшине.
Кил-çуртне те йăлтах тунă,
Ăшшине упрама пĕлнĕ
Ачасем те çитĕнтернĕ,
Эп телейлĕ кунта пулнă.
Савнă ялăм иккĕ манăн.
Иккĕшĕ те маншăн тан.
Пĕри пил парса ăсатнă,
Тепри илнĕ ытамне.

## Каçхи тӳпе

Каçхи тĕнчен – хăйĕн илемĕ.
Курмашкăн çеç эс ан ӳркен.
Çӳлелле, ав, тинкерер,
Тимлĕн тӳпене сăнар.
Ах, мĕн чухлĕ çутă çăлтăр
Каçхи анлă тӳпере.
Шăрçа сапнă чаршав евĕр
Курăнать вăл çĕр çинчен.
Чи çутти, чи çывăхри
Тӳпере – Шурăмпуç çăлтăр.
Шурăмпуçчен çутатать,
Йăлтăр-йăлтăр çеç тăвать.
Ав, кунтах пур Çурçĕр çăлтăр:
Килелле çул кăтартать.
Пуç тăрринче – Алтăр çăлтăр,
Çиччĕшĕ те çутă çăлтăр.
Чи вĕтти вара – Ала.
Курăнать, ак, кĕвенте.
Ячĕсем тĕлĕнмелле
Илтĕнеççĕ чăвашла.
Тулли Уйăх, кĕмĕл Уйăх,
Хуллен шăвать тӳпе тăрăх.
Çĕр çине вăл çутатать,
Тем ыранăн туйăнать.
Кĕвентеллĕ сарă хĕр, тен,
Çул шырать пуль кил тĕлне.
Тен, шырать вăл савнине,
Тупаймасть пуль ниепле.
Мĕн тери илемлĕ çут тĕнче.
Савăнса юрлать-çке чун-чĕре.
Ирхине сар хĕвел ăшăтать кăмăла,
Каçхине çăлтăрсем чĕнеççĕ вăййа.

## Юханшывăн ик çыран

Юханшыв юхать, юхать,
Хумĕ çырана çапать.
Паян хум сылтăм енче,
Ыран вăл тепĕр енче.
Юханшывăн ик çыран,
Сылтăммипе сулахай.
Икĕ çыран – пĕртăван,
Тĕл пулмаççĕ нихăçан.
Эпир аннен улттăн тан,
Улттăшĕ те – пĕртăван.
Çитĕннĕ пĕрле ялан,
Ӳссе тухса кайиччен.
Халь кашнин хăйĕн çемье,
Пурăнатпăр кам ăçта.
Йыхăрмастпăр пĕр-пĕрне,
Вăхăт çук-мĕн тĕл пулма.
Чун юратнă тăвансем,
Пĕр шелсĕр иртеç çулсем.
Пуçтарнас пирĕн пĕрле
Ним сăлтавсăрах пĕрре.
Юханшывăн ик çыран,
Пĕрлешмеççĕ нихăçан.
Эпир улттăн пĕртăван,
Тĕл пуласчĕ май пулсан.

**Любовь ЛУКИНА**

**Вăхăт ҫĕнĕ ятсем ыйтать**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

ТĔРЛЕНЧĔКСЕМ

# Сĕт нуши

Хветюҫ тулта ҫумăр шăпăртатнипе вăранчĕ. «Ах, ĕнене сумалла вĕт-ха, сĕт памалла, ултă сехетре машина килет», – васкаса тумланчĕ вăл. Сĕтел ҫинче ларакан графинран пĕр стакан шыв тултарса ĕҫрĕ те ĕне сума тухрĕ.

Сĕт пама тухнă ҫынсем ун хакĕ пирки хĕмленеҫҫĕ. «Шыв та пĕр пĕчĕк кĕленче вăтăр тенкĕ тăрать, мĕншĕн сĕт хакĕ ӳсмест», – тулли ҫăварĕпе ӳкĕнсе калаҫать леш касри Хветĕр.

«Да, пĕтĕмпех хакланса кайрĕ, газпа ҫутă хакне кашни ҫул ӳстереҫҫĕ. Ҫăкăрпа сахăр хакĕ каллех вĕрсе хăпартнă пек пысăкланчĕ, сĕтпе тырă хакĕ ҫеҫ пĕр вырăнта», – тет хĕремесленнĕ Петĕр.

Машина килсе чарăнчĕ, водитель сĕт йышăнма тытăнчĕ: «Сĕт ҫине шыв ан ярăр, прибор илсе килсе тĕрĕслетĕп», – тулли пысăк сасăпа пĕлтерчĕ вăл. Хветюҫăн чĕри карт сиксе илчĕ – пĕр кружка сĕт ĕҫсе ҫавăн чухлех шыв хушнăччĕ вăл...

# Ăс парасшăнччĕ...

Хветюҫ урам вĕҫĕнчи Толя патне васкарĕ.

Толя ик-виҫĕ ҫул Мускаври вахтăпа монолитра ĕҫлерĕ. Йывăр ĕҫпе нушаланнăскер, укҫа мĕнле хура тарпа килнине лайăх ăнланать. Сăвă йĕркисем те пуҫне килнĕччĕ ун:

Капитал таптать,
Мускава уттарать.
Чăвашĕ тар кăларса
Монолитра авăнать.

Толя больницăра выртнă хыҫҫăн Мускава кайма пăрахрĕ, вырăнти фермер патне ҫӳрекелерĕ. Больницăра пĕр вырăс хĕрарăмĕпе паллашнăччĕ. Ҫуллахи ăшă кун майрана хăй патĕнче кĕтсе илчĕ. Гитара каласах савăнчĕҫ вĕсем.

Хветюҫ пынă чух Людамайра пахчара утса ҫӳретчĕ, уҫă сывлăшпа киленетчĕ.

«Какой у нас чистый воздух, не то что в Москве», – терĕ хăна. «Да, в Москве воздух скверный, машин много», – хуравларĕ Люда. Хветюҫпа Люда пӳрте кĕчĕҫ. Кунта Тольăн юлташĕсем те пур иккен.

Чылай сыпкаланă Хветюҫа тăрук тем пырса ҫапрĕ. Толя ҫине ăшшăн пăхакан Люда ҫине тарăхса кайрĕ. «Эпĕ сана, Толя, сĕт ĕҫтерсе пурăнатăп, эсĕ кунта еркĕн майрапа савăнатăн, халех кăларса яратăп ăна», – тесе Людăна хулĕнчен сĕтĕрме тытăнчĕ. Лешĕ аптраканскер мар иккен, Хветюҫăн хулне хыҫалалла пăрса лартрĕ те пӳртĕнчен тĕксех кăларса ҫапрĕ. Лешĕ ҫерем ҫине тăрăнчĕ. «Чтобы я тебя больше здесь не видела», – пырса кĕчĕҫ Хветюҫăн хăлхине вырăс сăмахĕсем. Хветюҫ кун пеккине кĕтменччĕ. «Арҫынран вăйлă хĕрарăмсем те пулаҫҫĕ иккен. Аван мар пулса тухрĕ. Тольăран каҫару ыйтмалла», – тесе лавкканалла утрĕ.

**ЯНСАРИН**

# Шăллăм

Хăйĕн чĕкеҫ чĕлхипе
Вăл калать: ня-ня, ня-ня.
Пĕчĕкҫеҫĕ тяппипе
Ăнтăласшăн ман енне.
Пĕчĕк шăллăм, пĕчĕк тус,
Хăрамасăр ярса пус.
Ӳссен кайăпăр шкула,
Илĕн «пиллĕксем» кăна.

**Анастасия СМИРНОВА,
3-мĕш класс**

# Йытă

Ҫумăр ҫăвать, ҫил ахăрать,
Йытă тăрать пӳрт умĕнче.
Хăй нăйкăшать, тем шуйхăшать,
Тăвăл кĕрлет ун чунĕнче.
Темĕн шырать, темĕн кĕтет,
Сивĕ ҫĕрте хытă чĕтрет.
Тен, илĕртет ĕмĕт-инҫет,
Тен, хуҫаран ырлăх кĕтет?

**Александра ЗАЙЦЕВА,
6-мĕш класс,**
Туҫи Мăрат шкулĕ

# Ҫумăр айĕнче


Яндекс.ру сайтран.

Ҫумăр айĕнче хĕрача кулать,
Шыв тăрăх ҫара уран чупать.
Ҫумăр тата хытăрах ҫăвать,
Хĕрачапа ăмăртмалла вылять.
Унăн чунĕ телейпе тулать.
Тумламсем йăлтăртатса
ӳкеҫҫĕ.
Тавралла ҫут тĕнче илемленет,
Хурăнсем хавассăн
авăнаҫҫĕ.
Ҫумăр сулçă тăрăх шăпăртатать.
Ҫулҫăсенче ҫĕнĕ кĕвĕ
ҫуралать.
Хĕрачан ĕмĕтĕнче чи кирли –
Ашшĕ-амăшĕ юнашар пулни.
Капла ăмăр ҫанталăкра лайăх.
Ҫилĕ тата вăйлăрах вĕрет.
Аслатиллĕ ҫумăр та
хăратмасть.
Хĕрача хавассăн,
ҫăмăллăн кулать.

**М.СЕРГЕЕВА**

# Тăван тăрăх килĕшет

Питĕ илемлĕ вырăнта ларать пирĕн ял. Ун ҫумĕпе юханшыв авкаланса юхса иртет. Ял варрипе аслă ҫул выртать. Культура ҫурчĕ, магазин, ача сачĕ, икĕ хутлă шкул пур.

Туҫи Мăрат шкулне виҫĕ ялтан ачасем пĕлӳ пухма ҫӳреҫҫĕ. Шкулта тăхăр педагог ĕҫлет. Ку вĕренӳ ҫулĕнче 27 ача ăс пухрĕ. Вĕренме пур май туса панă. Мĕнмĕн кăна ҫук пулĕ классенче – кăтарту пособийĕсем, методика литератури, техника хатĕрĕсем, музыка инструменчĕсем. Ҫакă пĕтĕмпех вĕренӳ тухăҫлăхне ӳстерет.

Юратса ҫӳреҫҫĕ пĕлӳ ҫуртне ачасем. Ҫакă педагогсенчен те нумай килет ĕнтĕ. Вĕсем ырă чунлă пулни, ачапăчана юратни, ăнланни, паллах, вĕренекенсен кăмăлне ҫавăрать, хăй патне туртать.

*Ҫирĕп сывлăх, телей
сунатпăр,
Яланах сире,
учительсем.
Кăмăлтан паян сире
калатпăр:
Ăнса пыччăр
ĕҫĕр-хĕлĕрсем.*

**Павел СМИРНОВ,
9-мĕш класс**

# Туйăмпа ан выля

Кил хушшине кĕмен пулсан,
Хура куҫпа пăталаса,
Ăшшăн-ăшшăн ыталаса
Хĕрлĕ чечек паман пулсан,
«Каҫар мана», – темен пулсан
Эп кайăттăм инҫе-инҫе.
Чӳречерен шăхăратăн мана
Каҫхине уҫăлса ҫӳреме.
Тĕл пулсан эп калатăп сана:
«Кирлĕ мар туйăмпа вылямa».

***

Чĕре суранне халь тин сыватаймăн,
Халь тин пĕр ҫулпа пĕрле утас ҫук.
Пуҫăм та шуралчĕ, асăмран тухмарăн
«Айăпăм ман пысăк, каҫар мана», – терĕн.
Ҫĕмĕрт ҫеҫкере шап-шурă ларатчĕ.
Тĕл пулаттăмăр Атăл хĕрринче.
Виҫĕ ҫул ҫӳресен мăшăр пулма ыйтрăн.
Санпа ҫеҫ, пĕр санпа телейлĕччĕ эп.
Юлташна итлерĕн, суя сăмах сарчĕ,
Ĕненмерĕн мана, урăх арăм тупрăн.
Ҫамрăк пуҫăма амантрăн, таптарăн,
Минтер пичĕ йĕпенчĕ те йĕпенчĕ куҫҫульпе.
Кĕтмен тĕлпулу, ăстан килсе ҫитрĕн.
Хăнана чĕнместĕп, пĕрле пулас ҫук.
Чĕре суранне халь тин сыватаймăн,
Халь тин пĕр ҫулпа пĕрле утас ҫук.

***

Мĕнле алăка уҫмалла-ши?
Мĕнпе тĕкĕленĕ шалтан?
Хапха тăррипе сикмелле-ши?
Кам питĕрнĕ, тухăр унтан!
Санран кун пекки эп кĕтменччĕ,
Кĕтменччĕ ҫапла пуласса.
Те эсĕ пуртан чун хурланчĕ,
Те кĕтрĕн мана каясса.
Пĕр сăмаха миҫе каларăн?
Арҫын ури утмасть килте.
Пĕлетĕп, мана ĕненмерĕн.
Витсе хутăн хура тăпрапа.

**Елизавета ИГНАТЬЕВА**
Элмен Сунар